# Чăваш çырулăхĕн чаплă уявĕ




**Николай ПЕТРОВ**

Этемлĕх историйĕшĕн çырулăх çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кирек мĕнле халăхăн та культура аталанăвĕ çырулăх пуçланнипе çыхăннă. Çырулăхсăр ăстăн пуянлăхне упраса хăварма та, ăна малалла аталантарма та çук. Çырулăха пула кăна халăхсем хăйсен культурине, ĕмĕрсем хушшин аталантарса, пĕтĕм тĕнче умне кăларма пултараççĕ, пĕтĕм тĕнче культурин пуянлăхĕнчен вăй илсе, тăван культурăна малалла аталантараççĕ.

Чăваш çырулăхĕн ĕмĕрĕ вăрăмах мар: вăл икĕ çĕр çул урлă кăна каçнă-ха. Унăн пĕрремĕш çĕр çулне эпир кивĕ çырулăх тапхăрĕ тетпĕр. Вăл XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çуррине пуçланнă та XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсем пуçламăшĕнче вĕçленнĕ. Çак тапхăрти çырулăхăн хăйне тивĕçлĕ алфавичĕ пулман. XVIII ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче, вырăс алфавичĕпе усă курса, «Вырăсла-тутарла--чăвашла-мордвалла словарь» тата «Вырăсла-чăвашла -марилле-мордвалла словарь» çырса хатĕрленĕ. 1769 çулта Питĕрте «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» ятлă кĕнеке пичетленсе тухнă. Çак кĕнекерен пуçласа чăваш çырулăхĕнче вырăс саспаллисемпе усă курасси йăлана кĕрсе çирĕпленнĕ. Ку çеç те мар-ха. Пĕрремĕш чăваш грамматики вăл — тури диалект грамматики. Çак грамматикăран пуçласа тури диалект çырулăх чĕлхин никĕсĕ пулса тăрать. Çырулăхри тури диалект çĕр çула яхăн тăсăлнă. Çак хушăра чăвашла 20 кĕнеке ытла çапăнса тухнă. Кун çути курмасăр алçыру халлĕн юлнисем те пур. Вĕсем, пурте тенĕ пекех,— вырăсларан е кивĕ славян чĕлхинчен куçарнăскерсем. Куçарасса та вĕсене чăвашсем хушшинче ĕçлекен чиркÿ çыннисем валли çурма чăваш, çурма вырăс пупсем куçарнă. Оригинал тыткăнĕнчен хăтăлаймасăр сăмах хыççăн сăмах куçарнă пирки çак тапхăрта кăларнă кĕнекесен чĕлхи халăх чĕлхинчен аякра тăнă. XVIII ĕмĕр вĕсĕнче Ермей Рожанский куçарнă «Кĕске катихизиса» илĕпĕр-и, е Петр Талиевăн «Отче наш» кĕллине тытса пăхăпăр, е Иван Русановскипе Григорий Рожановский куçарăвĕсен алçырăвĕсене тишкĕрĕпĕр — вĕсене пурне те ăнланма йывăр. 1820 çулта Хусанта çапăнса тухнă 514 страницăллă «Святой Евангель» пирки те çавнах каламалла.

XIX ĕмĕр варринелле чăваш кĕнеке-çыру чĕлхи юсанма тытăнни палăрать. Çакна эпир Стефан Элпидин 1832, 1858 çулсенче куçарса кăларнă кĕнекесенчен те лайăх куратпăр. Тăлмач вырăс синтаксисĕн тыткăнĕнчен пĕтĕмпех хăтăлса çитеймен пулин те, чăваш кĕнекин чĕлхине чĕрĕ калаçу чĕлхипе çывăхлатма тăрăшнă. Чĕрĕ калаçу чĕлхи çак тапхăрти çырулăхра уйрăмах оригиналлă произведенисенче лайăх палăрать. Кунта Д. Ознобишин, А. Фукс, В. Сбоев, С. Михайлов çырса илнĕ халăх произведенийĕсене асăнмалла. Илсе пăхар-ха С. Михайловăн 1853 çулта Хусанта çапăнса тухнă «Чувашские разговоры и сказки» кĕнекине. Унта пичетленнĕ «Чим, чим кызыя», «Айда инге вурмана», «Чăваш каччисен юрри», «Еçкĕçикĕ юрри» тата ытти сăвă-юрăсемпе юмах-халапсен чĕлхи—тури чăвашсем калаçакан чĕрĕ чăваш чĕлхи. Тĕслĕхшĕн «Сярмыспа оба тос полнă» юмаха илĕпĕр.

«Пре сярмусъ кукъ куклать теть, оба онъ патне пырса ситеть теть, она калать теть: обе сана сизаярынъ; Сярмысъ она таргаслать теть; оба тосымъ мана ан си, перьле тосъ полыбаръ, кукъ кукלаза орба аггыбаръ конда, санада манада сиди порынмашкынъ. Оба она итьлере, ыдать тада она Сярмысъ астарза: оба тосымъ! орба аггыбыръ, сана валя сьмелли поле, минь эза илесъ тінпъ туррыне илетны, кочипе илетны? Хам эбе кирекъ-минь ильзен да пырать, эза минь илесь тінъ?»

Чăваш çырулăх чĕлхине чĕрĕ калаçу чĕлхин нормисене пăхăнтарса йĕркелес тĕлĕшпе XIX ĕмĕр варринче Н. И. Золотницкий нумай вăй хунă. «Ĕненĕр, сăмахсен çыхăнăвне чăваш синтаксисĕн законĕсене пăхăнмасăр йĕркеленĕрен, урăхла каласан, вырăсларан сăмах хыççăн сăмах куçарнăран чиркÿсенче чăвашла вĕрентсе калакан сăмахсене с «Кон святой борнызинь, али хорав идю сине: епле ман святой борнас?» йышши куçару кĕнекисене пачах та ăнланма çук. Çак кĕнекен ятне те мана ку таранччен пĕр чăваш та вырăсла куçарса е чăвашла ăнлантарса пама пултараймарĕ. Çакăн пек усăсăр куçарусемпе мĕн чухлĕ ĕç харама кайнă пулĕ»,— тесе çырнă Н. Золотницкий «Заметки для ознакомления с чувашским наречием» кĕнекинче. Калас пулать, кивĕ çырулăхăн çитменлĕхĕсем чăваш синтаксисĕн законĕсене хисепе хуманнинчен кăна мар, чăваш чĕлхинчи хăшпĕр уйрăм сасăсене палăртма тивĕçлĕ саспаллисем пулманнинчен те килнĕ. Вырăс алфавитĕнче чăваш чĕлхинчи *ă, ĕ, ÿ, ç* сасăсене палăртма тивĕçлĕ саспаллисем пулман пирки чăваш çырулăхĕнче çав сасăсене тĕрлĕ саспаллисемпе палăртнă, Спиридон Михайлов кĕнекинчен илсе кăтартнă тĕслĕхре, сăмахран, *ă* сасса тăватă саспаллипе палăртнă: *кăк* сăмаха *кук, ăна* сăмаха *она, тосăм* сăмаха *тосым, полăпăр* сăмаха *полыбар* тесе çырнă. *Çармăс* сăмаха пĕр тĕлте *сярмус,* тепĕр тĕлте *сярмыс* тенĕ. *Çол, çонат, çомăр* сăмахсене пĕрремĕш чăваш грамматикинче *сьолъ, сьонатъ, сьомаръ* çырнă. Стефан Элпидин *сіолъ, сіонатъ,* сіомыръ, Золотницкий *сŏл, сŏнат, сŏмыр* тесе палăртнă.

В. П. Вишневскин «Начертание правил чувашского языка и словарь, составленный для духовных училищ Казанской епархии» (1836) кĕнекинче *пÿсĕр* сăмаха *пюсюр, ÿсĕрес* сăмаха *узюряс, ĕмĕр* сăмаха *умюр, ĕмпÿ* сăмаха *умбю* çырнă. *Орă* (трезвый)—*ора* (нога), *çăра* (густой) — *çура* (детеныш, пчелиный рой), *çавă* (тот) — *çава* (коса), *торă* (бог)— *тора* (расческа) тата ытти çавăн пек сăмахсене çырура пĕр пекех çырнă, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса палăртас тесен, яланах ударени лартмалла пулнă. Хăш чухне вара ударени те пулăшайман, *тылă* (мялка) — *тăлă* (путы), *сăвă* (частушка) — *сывă* (здоровый), *хĕр* (девушка) — *хир* (степь) йышши сăмахсене омоним сăмахсем пек çырма тивнĕ. Çакă çырулăха аталантарма чылаях чăрмантарнă. Вырăс алфавитне чăваш çырулăхĕнче усă курма юрăхлă тăвас тесе XVIII ĕмĕрпе XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче чылайăшĕ тытăнса пăхнă (Е. Рожанский, П. Талиев, С. Элпидин). XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри пуçламăшĕнче Н. Золотницкий чăваш çырулăхĕнче хăшпĕр улшăнусем те тунă, уйрăм сасăсене палăртма алфавита ÿ, ŏ саспаллисем кĕртнĕ. Анчах хăйне уйрăм *ă, ĕ, ÿ, ç* сасăсене Н. Золотницкий усăмлăн палăртайман. Вăл *ÿ* саспаллипе пĕр вăхăтрах *ÿ* сасса та, *ĕ* сасса та палăртнă, сăмахран, *ÿпĕнтер* сăмаха *ÿбÿндэрь, сĕлĕ* сăмаха *сÿле* çырнă. Çак çитменлĕхе 18 çулхи И. Я. Яковлев та асăрханă. 1867 çулта Н. Золотницкин «Сŏлдалык кнеге» ятлă чăваш календарĕ пирки çырнă рецензийĕнче вăл çапла каланă: «Ман шутпа, чăваш чĕлхинчи сасăсем валли хăшпĕр паллăсем йышăнмалла, унсăрăн чăваш чĕлхинчи сасăсене вырăс саспаллисемпе палăртса çитерме çук», тенĕ. Çĕнĕ саспаллисем кирлине лайăх курса тăрсан та, И. Яковлев çав саспаллисене тăвас ĕçе тÿрех тытăнайман, мĕншĕн тесен малтан пĕлÿ пухмалла, чĕлхене тĕпчемелле пулнă. Тепĕр тăватă çултан, гимнази пĕтерсе Хусанти университета вĕренме кĕрсен, И. Яковлев вак халăхсене çутта кăларас ĕçре ырă ят илнĕ Н. И. Ильминский профессорпа çывăхланать. Н. Ильминский профессор системипе тата вăл ертсе пыракан крешĕн тутар шкулĕнчи тăван чĕлхепе вĕрентес ĕçĕн пахаенĕсемпе паллашнă хыççăн И. Яковлев кашни халăхăн хăйĕн çырулăхĕ пулма кирлине, тăван чĕлхепе тăван çырулăх урлă кăна халăхсем тĕттĕмлĕхрен, тĕшмĕшлĕхрен, чун нишлĕхĕнчен хăтăлма, хăйсен социаллă-экономикăлла пурнăçне çĕнетсе улăштарма, тăван культурăна туса хума пултарнине тавçăрса илнĕ. Çакă ăна чăваш çырулăхне тăвас ĕçе çине тăрсах тытăнма хистенĕ. Унăн ырă шухăшĕсене пурнăçа кĕртме Н. Ильминский пулăшса, хавхалантарса пынă.

Кирек хăш алфавит та чĕлхери сасăсен (фонемăсен) хисепне палăртнинчен пуçланать. Çавăнпа та, алфавит тăвас тесен, чи малтан чĕлхери сасăсен йышне; вĕсен сăн-сăнатне, тĕрлĕ вырăнта (сăмах пуçламăшĕнче, тĕрлĕ сасăсем хушшинче, сăмах вĕçĕнче) мĕнле янăранине палăртмалла. Çакна палăртма чĕрĕ калаçу чĕлхине сăнамалла, халăх сăмахлăхне пухмалла, сăмахсен йышне тĕпчемелле. Çак ĕçре И. Яковлева пулăшакансем те тупăннă. Н. Ильминский сĕннипе ăна пулăшма университетра арабпа тутар чĕлхине тĕпчекен вырăс студенчĕ В. Белилин, крешĕн тутар шкулĕнче вĕренекен чăваш С. Тимирясов хаваслансах килĕшнĕ. И. Яковлев, В. Белилин тата ачаранпах тутарсем хушшинче ÿснĕ С. Тимирясов чăваш чĕлхинчи сасăсене вырăспа тутар чĕлхинчи сасăсемпе танлаштарса тĕпченĕ. Çав çулсенче чăвашла текстсем ытла та çителĕксĕр пичетленĕ пирки Тимирясовĕ тутар кĕнекисене тÿрех чăвашла куçарнă, Белилинĕ вара вăл куçарнине хут çине çырса пынă. Хăй вырăс пулин те, хăйшĕн ют чĕлхе шутланакан чăваш чĕлхинчи сасăсене вăл уççăнах уйăрса илме вĕренсе çитнĕ. Çапла çак икĕ тус хĕл каçах чăваш чĕлхинчи сасăсене тĕпченĕ.

1871 çулхине, çулла, И. Яковлев вĕсене хăйĕн тăван çĕршывне экспедицие илсе кайнă. Экспедицие унăн Чĕмпĕрти ученикĕсем те (А. Рекеев, И. Иванов, Т. Петров) хутшăннă. Кунта вĕсем халăх сăвви-юррине, юмах-халапне пух-

